25-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 15 пус.

1942
СЕНТЯБРӖН
12
ШАМАТКУН
213 (6148) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

Шупашкарти «Росглаввино» совхозӑн дирекцийӗпе политотделӗ тӑратнӑ тӑрӑх, тырпулпа пахча-ҫимӗҫсене пухса кӗртес ӗҫре пысӑк ӗҫ тухӑҫлӑхӗ тата пысӑк пахалӑх кӑтартнӑшӑн ялхуҫалӑхӗнче малта пыракансен республикӑри Хисеп хӑми ҫине ҫаксене кӗртнӗ:

1. **М. Я. Елизаров** — бригадир-полевод, ҫав вӑхӑтрах вӑл Шупашкарти «Росглаввино» совхозӑн транспорт заведующийӗ пулса ӗҫлет. М. Елизаров юлташ 61 гектар ҫине акнӑ куракӑсене тата 24 гектар люцернӑна палӑртнӑ сроксенче тата лайӑх пахалӑхпа пухса кӗртнӗ. Акнӑ куракӑсене кашни гектартан планра кӑтартнӑ 20 центнер вырӑнне 31-шер центнер туса илнӗ. Ӗҫ лашисем нумай ӗҫлеҫҫӗ пулин те, лайӑх тӑраҫҫӗ.

2. **А. Г. Гурьев**—«Росглаввино» совхозӑн участок начальникӗ. Гурьев юлташ, агротехника ӗҫӗсене туса, ир ҫитӗнекен купӑстана кашни гектартан планра кӑтартнӑ 100 тонна вырӑнне 200-шер тонна туса илнӗ.

Малта пыракан ҫамрӑксене—комсомол рэтне!

Тӑван ҫӗршыв умӗнче пысӑк хӑрушлӑх тӑнӑ вӑхӑтра совет ҫамрӑкӗсем хӑйсен пурнӑҫне коммунистсен партипе, комсомолпа тачӑ ҫыхӑнтараҫҫӗ. Совет ҫамрӑкӗсем Ленин—Сталин ялавӗ айне пӗтӗҫсе, ҫав ялава ҫӳлте тытса пырса; тӑшмана хирӗҫ паттӑррӑн кӗрешеҫҫӗ. Коммунистсен партипе комсомол вӗрентсе ӳстернӗ ҫамрӑксем йышлӑ. Вӗсем ытти боецсене пример кӑтартаҫҫӗ.

Нимӗҫ захватчикӗсене хирӗҫ вӑрҫнӑ ҫӗрте хӑюллӑхпа паттӑрлӑх кӑтартнӑшӑн Совет Союзӗн Геройӗ званине илме тивӗҫлӗ пулнӑ пирӗн земляксене — М. Е. Ефимова; Ф. Н. Орлова, Б. М. Васильева коммунистсен партипе комсомол воспитани панӑ. Партин тата комсомолӑн Чӑваш организацийӗсем вӗрентсе ӳстернӗ пиншер ҫамрӑксем пирӗн ҫӗршыва хӳтӗленӗ ҫӗрте хӑйсен пурнӑҫӗсене хӗрхенмесӗр кӗрешеҫҫӗ. Тылра ӗҫлекен коммунистсемпе комсомолецсем те фронта ытларах та ытларах хӗҫпӑшал, апат-ҫимӗҫ, тумтир парма пӗтӗм вӑй-хала хурса тӑрӑшаҫҫӗ.

Совет ҫамрӑкӗсем пӗлеҫҫӗ: хальхи вӑрҫӑра пирӗн воинсене ертсе пыраканӗ, ҫӗнтерӗве организацилекенӗ коммунистсен партийӗ пулса тӑрать; унӑн помощникӗ — комсомол. Ҫавна пӗлсе тӑнипе вӗсем партие тата комсомола кӗреҫҫӗ. ВЛКСМ Чӑваш организацине кӑна вӑрҫӑ пуҫланнӑранпа виҫӗ пин ҫамрӑка яхӑн кӗнӗ. ВЛКСМ райкомӗсем чылайӑшӗ ҫамрӑксене комсомол ретне явӑҫтарас тӗлӗшпе тӑтӑшах ӗҫлесе пыраҫҫӗ. Вӑрнар районӗнче 1942 ҫулӑн малтанхи ҫурҫулӗнче 84 ҫынна комсомола илнӗ. Юлашки вӑхӑтра комсомолӑн Шӑхасан райкомӗ ҫак ӗҫе лайӑхлатнӑ, унта июль уйӑхӗнче 50 ҫын, августра 15 ҫын ВЛКСМ ретне кӗнӗ. Промышленность предприятисенчи организацисем чылайӑшӗ ку ӗҫе кашни уйӑхрах туса пыраҫҫӗ. Н-ски заводри организаци август уйӑхӗнче кӑна 23 ҫынна комсомола илнӗ. Ҫакӑнти организацин секретарӗ Партолин юлташ заводра малта пыракан ҫамрӑксене комсомола кӗртес тӗлӗшпе пӗрмаях ӗҫлет. Комсомола фабрикӑсемпе заводсенчи стахановецсем, колхозра тӑрӑшса ӗҫлекенсем, ҫамрӑк интеллигентсем —социализмлӑ ӑмӑртура малта пыракансем кӗреҫҫӗ.

Анчах ВЛКСМ ретне ҫӗнӗ членсем илес тӗлӗшпе комсомолӑн уйрӑм организацийӗсем ҫителӗксӗр ӗҫлеҫҫӗ-ха. ВЛКСМ Сӗнтӗрвӑрри райкомӗ (секретарӗ Чугунов юлташ) август уйӑхӗнче пӗр ҫынна кӑна комсомол ретне илнӗ. ВЛКСМ Тӑвай райкомӗ те (секретарӗ Яковлева юлташ) ҫӗнӗ членсем илессипе ҫителӗксӗр ӗҫлет, унта кӑҫалхи иккӗмӗш кварталта пӗтӗмпе 4 ҫынна, июльре—4, августра — 4 ҫынна ҫеҫ комсомол ретне явӑҫтарнӑ. Улатӑр райкомӗ август уйӑхӗнче икӗ ҫынна кӑна комсомола илнӗ. Чылай райкомсен секретарӗсем ку енӗпе тӑтӑшах ӗҫлемеҫҫӗ, союзра тӑман ҫамрӑксем хушшинчи ӗҫе организацилемеҫҫӗ, пуҫламӑш организацисен секретарӗсене ку енӗпе пулӑшса, вӗрентсе пымаҫҫӗ.

Комсомола илме юрӑхлӑ ҫамрӑксем кашни предприятирех, кашни колхозрах, кашни учрежденирех, кашни шкултах йышлӑ. Вӗсем хушшинче политикӑллӑ ӗҫе пӗрмаях туса пырас пулать. Анчах хӑшпӗр предприятисенче ҫамрӑксем хушшинче сахал ӗҫлеҫҫӗ-ха. Комсомолӑн Шупашкарти тир-сӑран заводӗнчи организацин секретарӗ Майорова юлташ ҫамрӑк рабочисемпе сахал ӗҫлет. Унта ҫамрӑксен пухӑвӗсем пулмаҫҫӗ, ҫамрӑксене комсомол организацин ӗҫӗ пухӑвӗсене явӑҫтармаҫҫӗ, вӗсем хушшинче политикӑллӑ калаҫусем ирттермеҫҫӗ. Ҫавӑнпа та ӗнтӗ кӑҫал унта пӗр ҫамрӑка та ВЛКСМ ретне явӑҫтарманнинчен нимӗн тӗлӗнмелли те ҫук. Шупашкарти пир-авӑр комбинатӗнче (организацин секретарӗ Корнеева юлташ) комсомола ҫӗнӗрен пӗр ҫын та илмен. Уйрӑм районсенче комсомола кӗме панӑ заявленисене темиҫе уйӑх хушши пӑхса тухмасӑр тытса усраҫҫӗ.

ВЛКСМ ретне ҫӗнӗ членсем илес ӗҫри ҫитменлӗхсене пӗтермелле. Райкомсен секретарӗсем кулленхи ӗҫре пуҫламӑш организацисен секретарӗсене пулӑшса пырсан, комсомола илес ӗҫри ҫитменлӗхсене ҫийӗнчех пӗтерме, ҫак ӗҫе кирлӗ пек туса пыма пулать. ВЛКСМ райкомӗсен, пуҫламӑш организацисен союзра тӑман ҫамрӑксем хушшинче ӗҫлесси ҫине ытларах ҫаврӑнса пӑхмалла, ҫамрӑксене комсомол тавра тачӑ пӗтӗҫтермелле. Пур ҫӗрте те, пур ӗҫре те союзра тӑман ҫамрӑксем комсомолецсемпе пӗрле пулаҫҫӗ, пӗрле ӗҫлеҫҫӗ. Кашни комсомолецӑн союзра тӑман ҫамрӑксене политикӑллӑ ыйтусене ӑнланса илме, политикӑллӑ пӗлӗве ӳстерме пулӑшмалла. ВЛКСМ организацийӗсен комсомола ҫӗнӗрен илнӗ ҫамрӑксем хушшинче ӗҫлесси ҫинчен те манма юрамасть.

Пирӗн ҫӗршыв нихӑҫанхинчен те ответлӑ самантра пурӑнать. Ҫак ҫавтери ответлӑ вӑхӑтра ҫамрӑксене ҫӗршывӑн политикӑллӑ пурнӑҫне ытларах хутшӑнтарса пырас пулать. Тӑван ҫӗршыв умӗнче пысӑк хӑрушлӑх тӑнине ӑнланса илсе, тӑшмана тӗппипех ҫапса аркатас вӑхӑта ҫывӑхартассишӗн пӗтӗм чун-чӗререн тӑрӑшакан ҫамрӑксен вырӑнӗ—комсомол ретӗнче.

ВЦСПС-па пӗр Халӑх Комиссариатӗнче

Профессиллӗ Союзсен Пӗтӗм Союзри Центральный Совечӗпе Халӑх Комиссариачӗсенчен пӗри 1942 ҫулти август уйӑхӗнчи социализмлӑ ӑмӑртӑвӑн итогӗсене пӑхса тухнӑ.

ВЦСПС-па Халӑх Комиссариачӗ Н-ски завод (главнӑй инженер Челноков юлташ) лайӑх ӗҫленине палӑртнӑ. Ҫак завод август уйӑхӗнче государство панӑ программӑна ирттерсе пурнӑҫа кӗртнӗ.

* * *

Н-ски заводӑн коллективне промышленноҫӑн пӗр отраслӗн малта пыракан предприятийӗсен шутӗнче тивӗҫлипех паллӑ тунӑ. Вӑл август уйӑхӗнче продукци туса кӑларас плана ӑнӑҫлӑн вӗҫленӗ. Заводӑн ӗҫне лайӑх хак пани, паллах, рабочисене, инженерсене, техниксене тата служащисене сентябрь уйӑхӗнче—Пӗтӗм Союзри социализмлӑ ӑмӑртӑвӑн пиллӗкмӗш турӗнче—татах та пысӑк ҫитӗнӳсем тӑвассишӗн кӗрешме хавхалантарать. Заводӑн задачи—производство планне пур йышши изделисем тӑрӑх та тултарасси, фронт ыйтнине ҫителӗклӗ таран парса тӑрасси пулать. Ҫак задачӑна коллектив ӑнӑҫлӑн пурнӑҫа кӗртме пултарать тата ӑна пурнӑҫа кӗртмеллех.

Совет Информаци Бюровӗнчен

Сентябрӗн 10-мӗшӗнчи каҫхи пӗлтерӳ

Сентябрӗн 10-мӗшӗнче пирӗн войскӑсем противникпа **Сталинградран** хӗвеланӑҫнерехре тата кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре, ҫавӑн пекех тата **Моздак** районӗнче тата **Новороссийск** урамӗсенче хаяррӑн ҫапӑҫнӑ. Ытти фронтсенче паллӑ улшӑнусемех пулман.

* * *

Сентябрӗн 9-мӗшӗнче пирӗн авиаци чаҫӗсем фронтӑн тӗрлӗ участокӗсенче нимӗҫсен 30 танкӗпе бронемашинине ҫитти, войскӑсемпе грузсем турттарса пыракан 150 автомашинине, боеприпассем тиенӗ 40 лавне пӗтерсе тӑкнӑ е сиенленӗ, полевой тата зенитнӑй артиллерин 14 батарейине пусарса лартнӑ, пӗр поезда ҫӗмӗрнӗ, противникӑн пехотине пӗр батальона ҫити сапаласа янӑ, пӗр пайне пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Сталинградран хӗвеланӑҫнерехре хӗрӳллӗ ҫапӑҫусем пынӑ. Пӗр участокра пирӗн чаҫсем оборонӑллӑ йывӑр ҫапӑҫусем хыҫҫӑн халӑх пурӑнакан виҫӗ пунктран тухса кайнӑ. Нимӗҫсен 50 танкне яхӑн тата тӑшман пехотин икӗ полкне яхӑн Н-ски чаҫӑн позицийӗсем ҫине наступлени тунӑ. Пирӗн боецсем нимӗҫсен 7 танкне тата 400 гитлеровеца ҫити пӗтерсе тӑкнӑ. Противник танкӗсен групп пӗр пахха вырсотан районне татса кӗнӗ. Унта кунӗпех вӑйлӑ ҫапӑҫусем пынӑ, вӗсем пӗрре пӗр енӗшӗн, тепре тепӗр енӗшӗн ӑнӑҫлӑ пулнӑ.

Совет летчикӗсем нимӗҫ войскисен ҫапӑҫу йӗркисене тата малти позицисем патнелле пыракан резервсене тӑтӑшах пыра-пыра ҫапаҫҫӗ. Пирӗн авиаци чаҫӗсем юлашки икӗ кун хушшинче Сталинград фронтӗнче нимӗҫсен 30 танкне ҫити тата войскӑсемпе грузсем турттарса пыракан 100 автомашинине ҫити пӗтерсе тӑкнӑ е сиенленӗ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче нимӗҫсен 18 самолетне персе ӳкернӗ.

* * *

Сталинградран кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре пирӗн танкистсем противникӑн атакине сирсе ярса 13 танка ҫити тата нимӗҫсен 150 автомашинине пӗтерсе тӑкнӑ. Пирӗн артиллери тӑшманӑн йышлӑн пухӑнса тӑнӑ пехотине сапаласа янӑ, 14 автомашина пӗтерсе тӑкнӑ тата противникӑн боеприпассем усракан икӗ складне сирпӗнтерсе янӑ.

* * *

Новороссийск районӗнче пирӗн чаҫсем хулан ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫ енчи хӗррине татса кӗнӗ фашистла войскӑсемпе хаяррӑн ҫапӑҫнӑ. Тинӗҫ пехотин Н-ски подразделенине гитлеровецсем ҫавӑрса илнӗ пулнӑ. Темиҫе сехет пынӑ танмар ҫапӑҫура морякcем нимӗҫсен 120 салтакӗпе офицерне пӗтерсе тӑкнӑ тата хӑйсене ҫавӑрса илнӗ ункӑран шӑтарса тухнӑ. Панасенко юлташӑн артиллери батарейи тӳрремӗн персе тӑшманӑн пехотине пӗр батальона ҫити вӗлерсе пӗтернӗ.

* * *

Моздок районӗнче пирӗн войскӑсем противникӑн шыв урлӑ каҫнӑ войскисемпе ҫапӑҫнӑ. Ҫав участокра гитлеровецсем питех те пысӑк ҫухатусем тӳсеҫҫӗ. Нимӗҫсен 370-мӗш пехотнӑй дивизийӗнчен тыткӑна илнӗ салтаксемпе офицерсем вӗсен дивизине ҫав юханшыв патӗнчи ҫапӑҫусенче аркатса тӑкни ҫинчен каласа панӑ. Нумай батальонсене пӗтӗмӗшпех пӗтерсе тӑкнӑ. Ҫӑлӑнса юлнӑ ротӑсенче мӗнпурӗ те вунӑ-вуникшер ҫын ҫеҫ тӑрса юлнӑ.

* * *

Воронежран кӑнтӑртарахри пӗр участокра противникӑн пехоти танксем пулӑшса пынипе пирӗн позицисене атакӑланӑ. Малтан гитлеровецсем пирӗн чаҫсене каялла чакарса, халӑх пурӑнакан пӗр пунктӑн хӗррине татса кӗме пултарнӑ. Противникӑн наступленине чарса лартнӑ. Пирӗн чаҫсем хирӗҫ пырса ҫапса каҫпала хӑйсен позицийӗсене каялла тытса илнӗ те ҫав позицисенче ҫапӑҫнӑ. Пӗр кун хушшинче нимӗҫсен 10 танкне, миномётсен 6 батарейине, 24 автомашинӑна тата противникӑн пехотине виҫӗ батальона ҫити пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Вилнӗ нимӗҫ офицерӗ Герман ҫумӗнче Краков хулинчен унӑн тусӗ Готфрид ҫырнӑ ҫыру тупнӑ. Ҫав ҫырура ҫапла каланӑ: «Эпӗ каллех амантӑм, ҫавӑн пек телейлӗ ҫӑлӑнса тухнӑшӑн эпӗ питех те хавас. Кӑнтӑрта ҫапӑҫакансенчен кам та пулин чӗрӗ тӑрса юлайӗши вара. Пирӗн полк питех те пысӑк ҫухатусем тӳсрӗ, унӑн ячӗ ҫеҫ тӑрса юлчӗ ӗнтӗ. Эпир калама ҫук нумай танк, артиллери, пулемет тата авиаци пухса тӑратрӑмӑр. Эпир вырӑссене часах ҫӗнтерсе хамӑрӑн хӗвеланӑҫӗнчи задачӑсене пурнӑҫа кӗртме шутланӑччӗ. Анчах ҫакӑнта эпир йӑнӑшрӑмӑр. Вырӑссем халиччен курман пек вӑйлӑн ҫапӑҫаҫҫӗ. Сталинград ҫывӑхӗнчи кашни ял пире пысӑк тата саплама ҫук ҫухатусем тӳстерет».

* * *

Нимӗҫсен 18-мӗш моторизованнӑй дивизийӗнчи 51-мӗш полкран пирӗн еннелле хӑйсен ирӗкӗпе куҫнӑ салтаксем Адольф Ш. тата Карл. Э. нимӗҫ влаҫӗсем тыткӑна лекнӗ совет ҫыннисене тискеррӗн асаплантарни ҫинчен каласа панӑ. «Арентсвальд Хутув хушшинчи ҫула тунӑ ҫӗрте тыткӑна лекнӗ вырӑс ҫыннисем ӗҫленӗ. Вӗсем пурӑннӑ условисем чӑтма ҫук йывӑр пулнӑ. Выҫӑ вилес мар тесе ҫимелли питех те пӗчӗк нормӑн чылай пысӑк пайне лагерь начальникӗ хӑй валли илсе тӑнӑ. Лагерьте вар-хырӑм тифӗ сарӑлнӑ. Чирлисене пурне те пӗр барака куҫарнӑ та наркӑмӑш парса вӗлернӗ. Ҫӗрле вӗсене пурне те пӗр шӑтӑка пытарнӑ».

* * *

Германин тӗрлӗ хулисенчен тата нимӗҫсем оккупациленӗ ҫӗршывсенчен унта Совет Союзӗпе Германи хушшинчи фронтран аманнӑ салтаксемпе офицерсем ытла та йышлӑн килсе тӑни ҫинчен пӗлтереҫҫӗ. Вена хулин пӗр вокзалӗнче 6 санитарнӑй поезд пушатасса кӗтсе пӗр эрне тӑнӑ. Ҫав вӑхӑт хушшинче вагонсенче 67 ҫын вилнӗ. Ҫын ытларах вырӑнаҫтарма пултӑр тесе, хӑшпӗр госпитальсенче нарӑсене икӗ хутлӑ тӑваҫҫӗ. Мюнхенри пӗр госпитальре, 400 ҫын вырӑнаҫтармалласкерте, пин ҫынна яхӑн пурӑнать. Аманнисем коридорсенче тата пусмасен площадкисем ҫинче урайӗнчех выртса тӑраҫҫӗ.

Сентябрӗн 11-мӗшӗнчи ирхи пӗлтерӳрен

Сентябрӗн 11-мӗш ыран тенӗ чух ҫӗрле пирӗн войскӑсем противникпа **Сталинградран** хӗвеланӑҫнерехре тата хӗвелтухӑҫнерехре, ҫавӑн пекех тата **Моздок** районӗнче тата **Новороссийск** урамӗсенче ҫапӑҫнӑ.

Ытти фронтсенче паллӑ улшӑнусемех пулман.

* * *

Сталинградран хӗвеланӑҫнерехре пирӗн войскӑсем оборонӑра тӑрса противникӑн наступлени тӑвакан танкӗсемпе тата пехотипе хӗрӳллӗн ҫапӑҫнӑ. Н-ски стрелковӑй часть гитлеровецсен виҫӗ атакине сирсе янӑ, нимӗҫсен 6 танкне тата противникӑн пехотине икӗ ротӑна ҫити пӗтерсе тӑкнӑ. Тепӗр участокра противникӑн пирӗн войскӑсем тӑракан вырӑна сӑрхӑнса кӗнӗ автоматчикӗсемпе ҫапӑҫнӑ. Нимӗҫ автоматчикӗсене 100 ҫынна ытла пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Сталинградран кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре пӗр участокра пирӗн позицисене противникӑн танкӗсемпе пехотин пысӑк вӑйӗсем атакӑланӑ. Пирӗн чаҫсем темиҫе хут контратака туса нимӗҫсене пысӑк ҫухатусем кӳнӗ. 11 танк, войскӑсем турттарса пыракан 5 автомашинӑна, 9 противотанковӑй оруди тата 400 гитлеровеца ҫити пӗтерсе тӑкнӑ. Тепӗр участокра Н-ски часть вӑйлӑ ҫапӑҫусем хыҫҫӑн халӑх пурӑнакан пӗр пунктран тухса кайнӑ.

* * *

Новороссийскра урамсенче вӑйлӑн ҫапӑҫнӑ. Противник пысӑк ҫухатусем тӳссе, пирӗн чаҫсене каялла чакарнӑ та темиҫе урама йышӑнса илнӗ. Тинӗҫ пехотин отрячӗ хӳтӗлекен пӗр участокра краснофлотецсем румынсен ротине пӗтерсе тӑкнӑ тата нимӗҫсен 3 танкне персе ҫӗмӗрнӗ. Тепӗр районра пирӗн бронебойщиксем противникӑн 2 танкӗпе бронемашинине ҫунтарса янӑ тата персе ҫӗмӗрнӗ.

* * *

Хӗвеланӑҫ фрончӗн участокӗсенчен пӗринче пирӗн чаҫсем, минӑсем хурса тухнӑ вырӑнсем урлӑ каҫса тата противник вӑйлӑн хирӗҫ тӑнине ҫӗнтерсе, халӑх пурӑнакан пысӑк пунктӑн хӗррине ҫӗмӗрсе кӗрсе кайнӑ. Нимӗҫсен пӗр танкне тата боеприпассем нумай тытса илнӗ. Пирӗн артиллеристсем пехота подразделенийӗсем валли ҫул уҫса пырса, тӑшманӑн 25 дзотне тата 9 блиндажне ҫӗмӗрнӗ, миномётсен 4 батарейине тата артиллерин 3 батарейине пусарса лартнӑ.

* * *

Нимӗҫсен фашистла ирсӗрӗсем Ленинград облаҫӗнчи Белебелковски ялсоветне кӗрекен 22 яла ҫунтарса янӑ. 428 ҫурт мӗнпур хуралтӑсемпе пӗрле ҫунса кайнӑ. Фашистла бандитсем вырӑнти вуншар ҫынсене асаплантарса тата персе вӗлернӗ.

* * *

Югослави патриочӗсем нимӗҫсемпе итальянецсен захватчикӗсене хирӗҫ ӑнӑҫлӑн кӗрешеҫҫӗ. Баня Лука хулинчен инҫех мар вырӑнта пулса иртнӗ хаяр ҫапӑҫусенче партизансем итальянецсен 400 салтакӗпе офицерне яхӑн пӗтерсе тӑкнӑ, кунсӑр пуҫне партизансем 4 танка ҫунтарса янӑ тата боеприпассем нумай тытса илнӗ. Рума станцийӗ ҫывӑхӗнче партизансен отрячӗ ҫар поездне тытса чарнӑ. Гитлеровецсем вагонсенчен сиксе ансан, партизансем вӗсем ҫине пеме тытӑннӑ. Чугунҫул ҫинче 200 оккупант ытла вилсе выртнӑ.

Сентябрӗн 10-мӗш ыран тенӗ чух ҫӗрле пирӗн самолетсем Будапешт, Берлин, Кенигсберг ҫине тата Хӗвелтухӑҫ Германин ытти хӑшпӗр хулисем ҫине бомбӑсем пӑрахнӑ

Сентябрӗн 10-мӗш ыран тенӗ чух ҫӗрле пирӗн самолетсен пысӑк групп ҫанталӑкӑн йывӑр условийӗсенче Будапешт, Берлин, Кенигсберг хулисенчи тата Хӗвелтухӑҫ Германин ытти хӑшпӗр хулисенчи ҫарпа промышленность объекчӗсем ҫине вӗҫсе кайса бомбӑсем пӑрахнӑ.

Бомбӑсем пӑрахнине пула Будапештра 38 ҫӗрте пушарсем тухнӑ, вӗсенчен 12-шӗ пысӑк пушарсем пулнӑ. 8 тӗлте вӑйлӑ взрывсем пулнине палӑртнӑ.

Берлинра 12 ҫӗрте пушар тухнӑ, вӗсенчен 6-шӗ пысӑк пушарсем пулнӑ. 4 тӗлте вӑйлӑ взрывсем пулнине палӑртнӑ.

Кенигсбергра 16 ҫӗрте пушарсем тухнӑ, вӗсенчен 6-шӗ пысӑк пушарсем пулнӑ. 4 тӗлте вӑйлӑ взрывсем пулнине палӑртнӑ.

Пирӗн самолетсем, икӗ самолетсӑр пуҫне, пурте хӑйсен базисене таврӑннӑ.

Отечественнӑй аслӑ вӑрҫӑ фрончӗсенче



ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ (Ленинград фрончӗ). **Ӳкерчӗк ҫинче:** М. Набеулия красноармеецпа (малти) М. Файзрахманов красноармеец Н. юханшывӗ хӗрринче боевой охраненире.

М. ТРАХМАН фотоӳкерчӗкӗ (ТАСС фотохроники).

Халӑх пурӑнакан темиҫе пункта тытса илнӗ

ХӖВЕЛАНӐҪ ФРОНЧӖ, сентябрӗн 10-мӗш. (**ТАСС спецкорӗ**). Фронтӑн участокӗсенчен пӗринче нимӗҫсем пирӗн чаҫсене хирӗҫ контратака тума хӑтланнӑ. Гитлерла пехотӑна танксемпе авиаци пулӑшса пынӑ. Совет боецӗсем, противникӑн контратакине сирӗппӗн чарса тӑрса, тӑшмана пысӑк сиен кӳнӗ. Нимӗҫсен командованийӗ ҫапӑҫӑва ҫӗнӗ вӑйсем кӗртсе янӑ. Анчах часах гитлеровецсем хаяррӑн кайнӑ та оборонӑна куҫнӑ. Нимӗҫсене позицисенче ҫирӗпленсе ларма памасӑр, пирӗн подразделенисем вӗсене хӑвӑтлӑн пырса ҫапса, сирсе пӑрахнӑ.

Малтанхи талӑксенчех совет войскисем, тӑшмана флангсенчен пырса ҫапса, ӑна халӑх пурӑнакан хӑшпӗр пунктсенчен, аслӑ ҫулран инҫех мар вырнаҫса тӑракан ял-кӗрсенчен, хӗсе-хӗсе кӑларнӑ. Юнлӑ ҫапӑҫусем часах вӑрманлӑ вырӑнта пуҫланса кайнӑ. Кунта час-часах штыксемпе те тӑра-тӑра ҫапӑҫнӑ.

Гварди капитанӗн Державин юлташӑн подразделенийӗ, вӑрмана пулеметсемпе пӑшалсенчен персе тасатса пырса, виҫӗ сехет хушшинче 5—6 километр малалла кайнӑ. Фашистсем ҫав подразделение флангсенчен ҫавӑрса илме хӑтланнӑ, анчах Державин ҫакӑн ҫинчен малтанах пӗлнӗ те флангсене хӳтӗлессине вӑхӑтра организациленӗ. Ялсенчен пӗрине кӗтмен ҫӗртен ҫӗмӗрсе кӗрсе, гвардеецсем нимӗҫсенне 5 оруди, броньӑсем ҫӗмӗрекен снарядсем тултарнӑ 80 ешӗк, 2 автомашина, 6 пулемет тытса илнӗ.

Гвардин кӗҫӗн лейтенанчӗ Сахно командир пулса ертсе пыракан боецсен ушкӑнӗ тӑшманӑн тылне хӑюллӑн кӗрсе кайнӑ. Тӑшмана вӑйлӑн пырса ҫапса, гвардеецсем нимӗҫ салтакӗсене, нимӗҫсен батарейипе штабне тытса илнӗ.

Тыткӑна лекнӗ нимӗҫсем кӑтартса панинчен тӑшман пысӑк ҫухатусем тӳсни курӑнать. Юлашки кунсенче гитлеровецсен ҫапӑҫӑва ирӗксӗрех штабӑн ротине тата Брянск районӗнчен куҫарса килнӗ 75-мӗш сапернӑй батальона кӗртсе яма лекнӗ.

Вӑйлӑ ҫапӑҫусем малалла пыраҫҫӗ. Пуҫарулӑх пирӗннисен аллинче.

АРЕФЬЕВ.

Землянксен ҫырӑвӗсем

Каҫхи мӗлке

Сутӑ каҫ. Кун пек каҫсем ҫурҫӗр тӑрӑхӗнче, Ленинград ҫывӑхӗнче ҫеҫ пулаҫҫӗ. Хӗвел анать. Ҫаплах ҫутӑ. Каҫ те пулать, те пулмасть, — сисместӗн. Тӗнче ҫапах та тӗлӗрсе илет, ҫутӑ ирӗ кӗтет.

Пӗррехинче, ҫакӑн пек каҫхине, пирӗн фронтӑн пӗр пӗчӗк участокӗнче тӗлӗнмелле ӗҫ пулса иртрӗ.

Ку каҫхи пек шӑплӑх нихӑҫан та пулман, темелле. Пӗрре те фронтри пек мар. Таҫта ҫирӗклӗхре шӑпчӑк юрлать. Хушӑран вӑштӑр-ваштӑр ҫил вӗрсе илет. Волхов шывӗ тӑрӑх вӗтӗ-вӗтӗ хумсем чупса каяҫҫӗ. Пӗчӗкҫӗ пулӑсем чӑмпӑлтатса илеҫҫӗ.

Селимгалеев ҫыран хӗрринче, вӗтлӗхре, пытанса ларать. Куҫ пек тулли шыв ҫине пӑхса тӗлӗнет. Анлӑ Атӑла, хӑйӗн тӑван ялне—Тутар ҫӗршывне аса илет. Инҫе-инҫе вӗсем! Питех те инҫе унӑн улмуҫҫиллӗ колхозӗ...

— Совет ҫӗршывӗ сарлака. Тӑван ҫӗршыва тӑшмансенчен ҫӑлса хӑварас тетӗн пулсан, эсӗ ӑна кунта, фронтра, сыхла, хастар кӗреш!—терӗ пӗррехинче политрук.

Акӑ тӑван ҫӗршыв!

Киревсӗр тӑшман, пирӗн ҫӗршыва пайӑн-пайӑн ҫурса тӑкас тесе, унӑн пӗр пайӗ ҫине ирсӗр урине килсе пуснӑ.

Умра юхан шыв. Акӑ темӗскер тӳлек шыва хумхатрӗ. Пулӑ мар,—такам, вӑйлӑрах та вӑйлӑрах ишрӗ. Тӑрсан-тӑрсан, ҫырма хӗрринчи ҫӳҫесене темӗскер (такам) хускатрӗ. Инҫе те мар хура мӗлке йӑпшӑнса тухрӗ.

— Тӑр! Кам килет?—кӑшкӑрчӗ постра тӑракан Селимгалеев.

Хура мӗлке, пулӑ пек, ним те шарламасть. Хӑй утать те утать.

— Аллусене ҫӗкле!—хаяррӑн кӑшкӑрать каллех часовой.

— Эпӗ... эпӗ... эпӗ Мускав ҫынни. Эпӗ сире, ырӑ тусӑм, тытса чуптӑвӑттӑм,—ҫепӗҫҫӗн те «кӑмӑллӑн» юптарать каҫхи мӗлке.

«Ырӑ ҫын мар ку» — шухӑшласа илет часовой. Шӑпах ҫак самантра ун патне красноармеец Безбородов чупса ҫитет. Вӗсем «Мускав ҫыннипе» нумаях каласса тӑмаҫҫӗ. Вӗсем ӑна тытаҫҫӗ те ӗнсерен пара-пара кирлӗ вырӑна ӑсатаҫҫӗ.

«Кам вӑл? Мӗн шырать? Мӗн кирлӗ ӑна? Мӗншӗн ҫӗр хута шыв урлӑ ишсе каҫать? Ҫитменнине тата тӑшман енчен...,»—шухӑш вӗҫҫӗн ыйтать часовой хӑйӗнчен хӑй.

«Анчах пире улталаймӑн!»—тет вӑл ҫав вӑхӑтрах. Ҫапла, ҫапла! Пирӗн красноармеецсене халӗ улталаймӑн: вӗсем хаярланчӗҫ, ҫивӗчленчӗҫ!

Такӑна-такӑна утакан мӗлке курӑнми пулчӗ. Ӑна ӗнтӗ Безбородов штаба илсе ҫитерчӗ.

...Тепӗр икӗ-виҫӗ кунран полк комиссарӗ Савинов юлташ полкри красноармеецсене, командирсене тата политработниксене:

— «Мускав ҫынни»—фашистсем янӑ шпион. Мускава кайма документсем туса килнӗ,—терӗ.

Ҫакӑн хыҫҫӑн Селимгалеева пирӗн пӗтӗм часть пӗлекен пулчӗ. Вӑл хӑйӗн кашни юлташне тенӗпе пӗрех ҫав каҫхи мӗлке ҫинчен тепрер хут тӗпӗ-йӗрӗпе каласа пачӗ.

Политрук В. ДОЛГОВ.

СОВЕТ СОЮЗЕ ТАРАХ

ПӖТӖМ ҪӖРШЫВ ФРОНТА ПУЛӐШАТЬ

ВОЛОГДА. Харовски районри комсомолецсем ҫак кунсенче хӗрлӗ обоз янӑ. Вӗсем 72 центнер тырӑ, 116 центнер утӑ панӑ. Кубен-Озерски районри комсомолецсем 136 центнер тырӑ тата йӗтӗн вӑррипе пахча-ҫимӗҫсем нумай илсе пырса панӑ. (ТАСС).

ИРӖКЕ КАЛАРНӐ РАЙОНСЕНЕ ПУЛӐШАҪҪӖ

КАЛИНИН. Погорельски тата Зубцовски районсенчи колхозсене гитлеровецсем оккупаци вӑхӑтӗнче ҫаратса пӗтернӗ, пиншер ҫурта ҫунтарса янӑ, выльӑх-чӗрлӗхе тата инвентаре пӗтерсе тӑкнӑ. Ҫав асап курнӑ районсене халӗ вӑйлӑн пулӑшаҫҫӗ. Погорелӑйра МТС тӑваҫҫӗ. Машинӑсемпе орудисем уйӑрса хунӑ. Ӗҫ выльӑхӗ илсе пыраҫҫӗ. (ТАСС).

Дагестанӑн уйхирӗсенче

МАХАЧ-КАЛА. Гитлерла йыткӗтӗвӗсем чечекленсе тӑракан тулӑ крайӗн пуянлӑхӗсем патне талпӑнаҫҫӗ. Дагестанри хуласемпе ялсенче халӗ пурин те пӗр шухӑш ҫеҫ — паттӑр Хӗрлӗ Ҫара лайӑхрах пулӑшасчӗ, ӑна тӑшмана аркатса тӑкмашкӑн мӗн кирлине пурне те парасчӗ, теҫҫӗ вӗсем. Ҫурҫӗр Кавказри халӑхсен представителӗсен фашизма хирӗҫ тунӑ митингӗ чӗнсе калани ӗҫҫыннисене ҫӗнӗ ҫӗкленӳпе ӗҫлеме хавхалантарчӗ. Колхоз уйхирӗсенче халӗ питӗ пысӑк ҫӗкленӳпе ӗҫлеҫҫӗ. Тырра ҫулса пӗтереҫҫӗ ӗнтӗ, Хӗрлӗ обозсем пӗрин хыҫҫӑн тепри тырӑ леҫеҫҫӗ. Виҫӗ МТС комбайнпа вырмалли плана ирттерсе тултарнӑ. Республикӑн кӑнтӑрти пайӗнче ҫӗрмамӑкӗ пухма пуҫланӑ. Дагестанӑн колхозникӗсем пӑхса ӳстернӗ, питӗ лайӑх ҫитӗннӗ ҫӗрмамӑкне часах пухса кӗртӗҫ.

Кĕлтесене капана хывассипе авăн çапас ĕçе васкатар!

Кĕлте кӳнĕ çĕрте тырпула тăккаламалла мар. Çĕмел тĕпĕнчи пучахсене тĕплĕн пухмалла

Тырă памалли графика тултарса пымалла

ИЕПРЕÇ, сентябрĕн 11-мĕшĕ. (Телефонпа). Государствăна тырă тăратас тĕлĕшпе район чăтма çук начар ĕçлет. Хăвăртлăхсем ӳссе пырас вырăнне чакса пыраççĕ. Иккĕмĕш пилĕккунлăхра район графика 77,3 процент, виççĕмĕшĕнче 50,3 процент, тăваттăмĕшĕнче 35,4 процент, пиллĕкмĕшĕнче вара пĕтĕмпе те 18,9 процент çеç тултарнă.

Районра 48 колхоз, вĕсенчен 8 колхоз кăна государствăна тырă тăратмалли пилĕккунлăх графикне тултарнă. Ыттисем пачах начар ĕçлеççĕ. «Большевик» колхоз иккĕмĕшпе виççĕмĕш пилĕккунлăхра лайăх ĕçлерĕ, графика 135 шер процент тултарса пычĕ, тăваттăмĕшпе пиллĕкмĕш пилĕккунлăхсенче питĕ начар ĕçлерĕ. Тăваттăмĕш пилĕккунлăхра колхоз государствăна нимĕн чухлĕ те тырă леçмен. Çавăн пекех Димитров ячĕпе тăракан колхоз та государствăна тырă тăратмалли графиксене пурнăçламасть. Ятарласа организациленĕ транспорт бригадине салатса янă.

«Социализм», «17 партсъезд» колхозсем тырăсене вырса пĕтерсе 20—40 процентне çапнă. Анчах та малтанхи тырра государствăна парас вырăнне колхоз нушисем валли салатса янă. Çавăн пек тивĕçлĕ мар ĕçе тата партипе правительствăн постановленийĕсене пăсние ВКП(б) райкомĕ те (секретарĕ Артемьев юлташ), райсовет исполкомĕ те (председателĕ Алексеев юлташ), заготовка наркомачĕн районри уполномоченнăйĕ Григорьев юлташ та питĕ лайăх пĕлеççĕ пулин те, тивĕçлĕ мерăсем йышăнмаççĕ.

Чăтма çук япăх ĕçлекен колхозсем хушшинчех лайăх ĕçлекен колхозсем те пур. Анчах та вĕсем халлĕхе питĕ сахал-ха. «Коминтерн» колхоз государствăна тырă тăратас тĕлĕшпе ĕçлеме ятарласа 9 лаша уйăрса, транспорт бригади организациленĕ. Бригада лайăх ĕçленине пула, колхоз государствăна 333,7 центнер тырă леçнĕ. Графика яланах пурнăçласа пынă. Юлашки пилĕккунлăхра график тăрăх колхоз 46,6 центнер вырăнне 118,4 центнер тырă панă. Çавăн пекех «Эконом» колхоз та государствăна тырă тăратма тунă пĕтĕм графика пĕрле шутласан, плана 210 процент тултарнă.

Д. МИХАЙЛОВ.

ПУЧАХ ПУÇТАРНĂ ÇĔРТЕ

КАНАШ. Районри шкулсенче вĕренекен ачасем уроксем пĕтнĕ хыççăнах колхоз уйхирĕсене пучахсем пухма тухаççĕ. Сентябрĕн виççĕмĕшĕнче шкул ачисем 729 гектар çинче 69 центнер тырă пуçтарнă.

Тăккаланчăксене пухас тĕлĕшпе уйрăмăнах Янкăльчри вăтам шкулта вĕренекенсем (директорĕ Ефимова юлташ) лайăх ĕçлеççĕ. Ку шкулта пучахсем пухма икĕ отряд тунă. Отрядри пионерсемпе шкул ачисем виçĕ кун хушшинче 25 гектар çинчен 12 центнер тырă пуçтарса панă. Пучахсем пухас тĕлĕшпе Татмăшри туллимар вăтам тата Пикшихри вăтам шкулсенче вĕренекенсем те начар мар ĕçлеççĕ. Пикшихри шкул ачисем пĕр кун хушшинче 1,28 центнер тырă пуçтарчĕç.

А. ПАВЛОВА,
ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ.

Малтисен опычĕпе усă курмаççĕ

ВĂРМАР, сентябрĕн 11-мĕшĕ. (Телефонпа, хамăр корр.). Тырпулсене пухса кĕртес тĕлĕшпе фронтри пек ĕçлемелли вунăкунлăхра районри «Дружба», «Маяк», «Хĕрлĕ Шептах», «Коминтерн», «Хĕрлĕ Кĕтне», «Хĕрлĕ Шăхаль» колхозсем ялхуçалăхĕнчи мĕнпур ĕçсене хăвăрттăн туса пычĕç. Вĕсем кĕлте турттарас, авăн çапас ĕçсене кĕçех вĕçлеççĕ. Халĕ хĕрсех çĕрулми кăлараççĕ, государствăна ялхуçалăх продукчĕсем параççĕ.

Турттăм вăйĕ ситеймсĕртерех колхозсенче кĕлтесене алă вĕççĕн çĕклесе капана хывас ĕçе организациленĕ. Ку тĕлĕшпе Чупайри «Дружба» колхоз (председателĕ И. Григорьев) уйрăмах паха тĕслĕхсем кăтартать. Кунта кашни колхозник кунне 20—22-шер çĕмел кĕлтине капана хывнă çĕре çĕклет. Кĕлте турттарассинчен хăтарнă лашасемпе колхоз çĕрулми кăларать, государствăна ялхуçалăх продукчĕсем парать.

Анчах хăшпĕр колхозсем уборка ĕçĕсене хăвăртлатмалли майсемпе кирлĕ пек усă курмаççĕ. Кивĕ Вăрмарти «Большевик» колхозра пĕтĕм лашасене пĕр ĕçе яраççĕ те, ытти ĕçсем вара çав ĕç пĕтиччен кĕтсе тăраççĕ. Çапла черетлĕх пулса каять. Тырă акса пĕтернĕ хыççăн колхоз мĕнпур лашасене кĕлте турттарнă çĕре куçарнă. Ытти ĕçсем вара—государствăна обязательство тăрăх, МТС ĕçленĕшĕн тырă парас ĕçсем чарăнса ларнă. Çĕрулмине кунта кĕреçесемпе, хусăксемпе кăна кăлараççĕ.

— Эсир мĕншĕн кĕлтене алăпа çĕклес ĕçе организацилемен?—тесе ыйтсан, колхоз агротехникĕ Игнатьев юлташ шалтах тĕлĕнсе ӳкрĕ.

— Мĕн?—тет вăл.—Кĕлтесене алăпа çĕклесе капана хывмалла тетĕр-и? Кун çинчен эпĕ пĕрремĕш хут илтетĕп.

Колхоз агротехникĕ ку ĕç çинчен нимĕн те пĕлмест пулсан вара, ытти колхозниксенчен ыйтмалли те çук. Çакă çеç паллă: колхоз малалла та çапла ĕçлесе пырсан, кĕлтесене сентябрь уйăхĕнче те капана хывса пĕтереймест.

Çак колхоз ĕç планĕсĕр, мĕнле—май килнĕ çапла ĕçлет. Колхоз председателĕ Алексеев юлташ районри оргăнсем кăтартса панине пурнăçласа пымасть. Вĕсене нумай пулмасть райçĕрĕç пайĕ лашасен пĕр пайне кĕлте турттарас ĕçрен хăтарса çĕрулми кăларма яма хушнă. Анчах та вĕсем ку сĕнĕве пурнăçламан. «Хамăрăн та пуç пур, сирĕн сăмахсемсĕрех ĕçлеме пĕлетпĕр», —тесе ирттерсе янă вăл.

Сентябрĕн 9-мĕш тĕлне колхоз итомĕ çинче икĕ сложнăй молотилка ĕçлерĕ. Паха та типĕ тырра итем çинченех государствăна леçсе пама май пурччĕ. Колхоз председателĕ Алексеев ку ĕçе организацилемерĕ.

Иртнĕ çулхине колхоз çĕрулмине кĕреçепе тата хусăксемпе кăларнă. Çакăн пек туни ĕçе вăраха ярать. Апла пулин те, колхоз кăçал та иртнĕ çулхи йăнăшсенех тăвать. Çĕрулмине хусăкпа, кĕреçепе кăларни ĕç пахалăхне начарлатать, ĕç хăвăртлăхне чакарать. 3-мĕш бригадăри колхозницăсем кăларакан çĕрулми участокĕнче кашни тăваткăл метрта 5-шер çĕрулми çĕр айнех вырттса юлать. Кăларнă çĕрулмине пуçтарас ĕç те типтерсĕр. 4-мĕш бригадăра çĕрулмине кăларнă çĕрте ăшăх чакалаççĕ. Çавăнпа та нумай çĕрулми çĕр айĕнче юлать.

«Хĕрлĕ Шăхаль», «Хĕрлĕ Кĕтне», «Дружба» колхозсенче çĕрулмине пулгпа тата сухапуçсемпе кăлараççĕ. Ку колхозсенче ĕç пахалăхĕ те, ĕçĕн хăвăртлăхĕ те пысăк. «Хĕрлĕ Шăхаль» колхозра икĕ сухапуçпе ĕçлесе, кунне 7-шер гектар çĕрулми кăлараççĕ, 30 çын çĕрулмине пуçтарса ĕлкĕреççĕ. «Большевик» колхозăн та малта пыракан колхозсен опытне илмелле. Çĕрулмине сухапуçпе тата плугпа кăларассине организацилемелле.

«Большевик» колхозра кĕлте кӳнĕ çĕрте те пысăк çитменлĕхсем пур. Тăкаланчăксем калама çук пысăк. Анчах та кĕлте кӳрекенсем çĕмел тĕпне вырттса юлакан пучахсене пуçтармаççĕ. Сăмахран, пĕр çĕмел патĕнче пĕр килограма яхăн пучах тăкăнса юлать.

П. НИКОЛАЕВ.

Горючине тирпейлĕн расходламалла

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ хăйсен 1942 çулхи июнĕн 20-мĕшĕнче йышăннă постановленийĕнче горючине тата сĕрмелли материалсене тирпейлĕн тыткалас тĕлĕшпе тумалли мероприятисене лайăх палăртса хăварнăччĕ. Çакăн хыççăн Тăвай МТС-ĕнчи чылай бригадăсемпе трактористсем горючине тирпейлĕн тыткаласа перекетлеме пуçларĕç.

Постановлени тухнă хыççăн 4-мĕш бригадăри трактористсем хăйсем кăна 2.190 килограмм горючи перекетленĕ. ВКП(б) членĕ Дарья Ермолаева июнĕн 20-мĕшĕ хыççăн хăй пĕччен 766 килограмм перекетленĕ. 11-мĕш бригадăра ĕçлекен комсомолка Нина Кузьмина горючине тирпейлĕ тыткалас тĕлĕшпе МТС-ра чи малти вырăна йышăнчĕ. Вăл июнĕн 20-мĕшĕ хыççăн 900 килограмм ытла перекетлерĕ. Горючине перекетлес тĕлĕшпе 8-мĕш бригадăри В. Иванов, 9-мĕш бригадăри Н. Феодорова, 12-мĕш бригадăри Я. Чернов паха тĕслĕхсем кăтартрĕç.

Çак вăхăтрах çунтармалли тата сĕрмелли япаласене перекетлĕн тыткаламан фактсем пур-ха. 13-мĕш номерлĕ бригадăри трактористсем июнĕн 20-мĕшĕ хыççăн 335 килограмм горючи ытлашши расходласа янă. Афанасьев тракторист хăй пĕччен 98 килограмм ытлашши расходланă. Горючие тирпейлĕ тыткаласси вăрçă вăхăтĕнчи закон пулса тăрать пулсан та, чылай комбайнерсем ку тĕлĕшпе пысăк преступлени тăваççĕ.

Комбайнер Н. Тарасов комбайнпа тырă вырас ĕçре питĕ начар ĕçлерĕ. Вăл пурĕ те 58 гектар çеç вырчĕ, çав хушăрах 400 килограмм бензина ытлашши пĕтерчĕ. Тарасов ĕçре яланах ӳркеннĕ. Комбайнсене юсанă вăхăтра прогул тунăшăн Н. Тарасова суда панă. Çакăн пекех М. Сорокин комбайнер та ĕç çинче çителтен пăхнă пирки тырра мĕнпурĕ те 20 гектар çеç вырнă, çав хушăрах 121 килограмм горючи расходланă. Çакăншăн Сорокина ответ тыттарнă, малашне те çавăн пек тусассăнăна ĕçрен кăларса судпа ответ тыттарасси çинчен асăрхаттарнă. К. Антоновпа П. Туйгачев комбайнерсем комбайнпа тырă вырас ĕçре лайăх ĕçленĕ хушăрах горючине 200-шер килограмм тераиччен ытлашши расходланă. Вĕсене те выговор парса хытă асăрхаттарма тиврĕ.

В. ЧЕРНОВ,
Тăвай МТС политотделĕн начальникĕ.

20 колхоз кĕлтесене капана хывса пĕтернĕ

ЕТĔРНЕ, сентябрĕн 11-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри пур колхозсем те çуртыррисене вырса пĕтерчĕç. Пĕтĕмпе 51 колхозран 20 колхозра ыраш кĕлтисемпе çуртырри кĕлтисене капана хывса çитернĕ, 450 гектар çинчи тырпула çапнă.

Мăн Сĕнтĕрти «Комбайн» колхоз (председателĕ Михайлов) 335 гектар çинчи кĕлтесене пĕтĕмĕшпех капана хывса çитернĕ, 160 гектар çинчи ыраша çапнă. Колхозниксем итем çинче çĕрне-кунне пĕлмесĕр ĕçлеççĕ. Пĕр колхозник те хăйĕн нормине тултармасăр ĕçрен кĕмест. Кĕлте турттарнă çĕрте ĕçленĕ колхозниксем А. Петров, К. Козлова, Д. Романов кунсеренех нормăна 200-шер процент тултарса пынă. Капан тăвакан О. Ксенофонтов та кунне 2 норма тултарса пынă.

Кĕçĕн Чутайри Тельман ячĕпе тăракан, Кĕçĕн Хăмаркари «Родина», Егоркинăри «Парижская Коммуна» колхозсем кĕлтесене капана хывас ĕçсене ăнăçлăн вĕçлерĕç.

Кĕлтесене капана хывас ĕç «Победа», «Путь Ленина» колхозсенче çителĕксĕр пулса пырать. Ку колхозсенчи колхозниксем ĕçе ирхине 9 сехетре тин тухаççĕ те 6—7 сехетрех ĕçрен пăрахса кĕреççĕ.

И. ЛЬВОВ.

МТС ТЫРĂ ПУХСА КĔРТЕС ПЛАНА ТУЛТАРЧĔ

ÇĔМĔРЛЕ, сентябрĕн 10-мĕш. Машинно-тракторнăй станцинчи комбайнерсем тырпулсене вырса пуçтарса кĕртес ĕçре пĕр-пĕринпе ăмăртса, пысăк ĕç тухăçлăхĕ кăтартаççĕ. Кăçал колхозсен уйхирĕнче комбайнсемпе 1.500 гектар тырă вырса пуçтарнă, вăл МТС тырпулсене пухас плана 2 хут ирттерсе тултарни пулать.

МТС-ри паллă комбайнер Михайлов юлташ сезонра 80 гектар вырас вырăнне 500 гектар вырса, 300 килограмм горючи перекетлерĕ. Çавăн пекех комбайнер Чекменев юлташ 310 гектар, Мумиков 250 гектар тырă вырса пуçтарнă.

Халĕ вĕсем авăн çапас тĕлĕшпе те начар мар ĕçлеççĕ.

Р. ЕВГРАФОВ,
МТС политотдел начальникĕн заместителĕ.

Лайăх ĕçлерĕç

ЭЛĔК. Тукай колхозĕ çуртыррисене вырса пĕтернĕ хыççăнах, кĕлтесене те 123 гектар çинчен кӳрсе капана хывнă. Кĕлте кӳнĕ чухне вăтă колхозниксем Г. Романов, Л. Илларионов, А. Салтыкова тăрăшса ĕçлерĕç.

М. КУСТИКОВ.

Ачасен пулăшăвĕ

КОМСОМОЛЬСКОЕ. Тугайри пуçламăш шкулта вĕренекен ачасем колхоза тимлĕн пулăшса пыраççĕ. Çак кунсенче виççĕмĕш класра вĕренекенсем тăккаланса юлнă тырра 150 килограмм пуçтарнă, алăпа йăтса 50 урапа кĕлтене капана хывма пулăшнă.

Ялхуçалăх ĕçне хутшăннисĕр пуçне, ачасем 10 килограмм эмел курăкĕ, 5 килограмм акаци вăрри пуçтарнă.

А. ВОЛКОВА, Т. КАЗАКОВА, И. ЖУРАВЛЕВ.

Комсомолецсен активлăхне татах та ӳстерер

ВЛКСМ Обкомĕн июнь уйăхĕнче пулса иртнĕ пленумĕ комсомол организацийĕсене колхозсемпе совхозсен тата машинно-тракторнăй станцисен хуçалăх ĕçĕсене ытларах хутшăнса ĕçлеме хушса хăварчĕ.

Республикăри çамрăксем «1942 çулта уйри тырпулсене пуçтарса кĕртес тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлес ĕçе комсомол организацийĕсем хутшăнса ĕçлесси çинчен» ВЛКСМ Центральный Комитечĕ çырнă çырăва тата тырпулсене пуçтарса кĕртес ĕçе хутшăнса, паха тĕслĕхсем кăтартнă комсомол организацийĕсене куçса çӳрекен хĕрлĕ ялав памалла тăвасси çинчен ВКП(б) Обкомĕ йышăннă решение пысăк хавасլăхпа кĕтсе илчĕç. Комсомолăн Центральный Комитечĕн çырăвĕпе ВКП(б) Обкомĕн решенине сӳтсе-явнă хыççăн, колхозсемпе совхозсенчи тата МТС-сенчи комсомолецсем хăйсем çине конкретнăй обязательствăсем илсе, çав обязательствăсене пурнăçлама тытăнчĕç.

Уборка вăхăтĕнче 1.500 комсомолец ытла машиноведсем, 442 комсомолец комбайнерсем тата трактористсем пулса, темиçе пиншер комсомолецсем агитаторсемпе беседчиксем, стена хаçат редакторĕсем пулса ĕçлерĕç, халĕ те ĕçлеççĕ.

Комсомолецсем государствăна тырă парас тĕлĕшпе туса ирттернĕ воскресникре 8.750 лавпа 27.808 центнер тырă леçнĕ. Халĕ сентябрĕн 13-мĕшĕнче пулакан воскресникре те комсомолецсем ĕçе анлăн хутшăнма хатĕрленеççĕ.

Колхоз производствинче çамрăксем тĕп вырăн йышăнакансем пулса тăчĕç. Комсомолецсем ертсе пыракан колхозсемпе бригадăсем, яланхи пекех, малта пыракансен ретне тухрĕç. Октябрьски районри «Красная Чувашия» колхоз (председателĕ комсомолец Кузьмин юлташ) уйхир ĕçĕсене вĕçлес тĕлĕшпе малти вырăнта пырать. «Комсомолец» колхозри комсомолец Водяков ертсе пыракан бригада кĕрхи тырăсене 5 кунра вырса пĕтернĕ. «Венера» колхозри комсомолец Прокопьев стройран тухнă жнейкăна хăй ремонтласа, тырă вырнă çĕрте нормăна икшер хут тултарса ĕçленĕ.

Шупашкар районĕнче 351 комсомолец уйхир ĕçне хутшăнса ĕçлеççĕ, вĕсенчен 78-шĕ машиноведсем пулнă. 347 комсомолец-агитатор хăйсен обязанноçĕсене аван пурнăçласа пыраççĕ. Комсомолец Тимофеев ертсе пыракан «Новый быт» колхоз тырпула чи малтан вырса пĕтернĕ. «Трактор» колхозра комсомолка Т. Николаева кулленех 2—3 норма тултарса ĕçлет. «Актив», «Пятилетка» колхозсем тырă вырас тĕлĕшпе кая юлнă. Комсомол райкомĕ çак колхозсене пулăшма район центрĕнчи 52 комсомолеца янă. Вĕсем колхозсене тырă сене хăвăртрах вырса пĕтерес, кĕрхи ака тăвас, авăн çапас ĕçре пысăк пулăшу панă.

Сĕнтĕрвăрри районĕнчи комсомолецсем те уйхир ĕçĕнче колхозсене активлăн пулăшаççĕ. Комсомолецсем пуçарнипе Сталин ячĕпе тăракан колхозра авăн çапас, государствăна тырă парас тĕлĕшпе ĕçлеме ятарласа комсомолецсенчен бригада тунă. Социализмлă ăмăртура мала тухассишĕн кĕрешсе, комсомолец-машиноведсем Филатов, Федоров юлташсем кашни кун хăйсен ĕç нормисене 130-шар процент тултараççĕ. Уборка ĕçĕсене хăвăртрах вĕçлес тĕлĕшпе комсомолецсен 15 çынран тăракан агитбригади (руководителĕ пединститут студентки В. Михайлова юлташ) колхозсене сахал мар пулăшу панă. Çак бригада августăн 5-мĕшĕнчен пуçласа паянхи куна çитиччен 55 колхозра пулнă. Агитбригада членĕсем ирттен пуçласа тĕттĕмччĕнех уйхирте ĕçлеççĕ, колхозниксем каннă вăхăтра концертсем параççĕ, калаçусем, кĕске докладсем ирттереççĕ. Агитбригада членĕсем 29 номер боевой листок, 12 номер стена хаçачĕ кăларнă, 18 колхозра кăтарту хăмисем организациленĕ.

Çакăн пекех тата ВЛКСМ Вăрмар райкомĕ те комсомолецсен агитбригадине организациленĕ. Агитбригадăна комсомолка Бурмистрова юлташ ертсе пырать.

Районри чылай колхозсенче авăн çапас, тăкаксемпе кĕрешес тĕлĕшпе ĕçлеме комсомолецсемпе çамрăксен бригадисем тунă, 6 комсомолец Заготзерно пунктĕнче агитаторсем пулса ĕçлеççĕ. Вĕсем çакăнпа пĕрлех колхозсене паракан документсене хăвăрт тата тĕрĕс çырса пынине те тĕрĕслеççĕ.

Канаш районĕнчи çамрăк патриотсем хăйсем çине илнĕ обязательствăсене фронтри пек çирĕппĕн пурнăçлаççĕ. Машиноведсем пулса ĕçлекен 34 комсомолец пурте хăйсен нормисене ирттерсе тултарса пынă. Районри колхозсенче бригадирсем пулса—26, звеньевойсем пулса 85 комсомолец ĕçлеççĕ, 184 комсомолец уйхирте тата итем çинче ĕçлекен колхозниксем хушшинче агитациллĕ-массăллă ĕçе туса пыраççĕ. Вĕсем уборка иртсе пынă вăхăтра колхозниксем хушшинче 3.931 калаçу, 493 доклад ирттернĕ, 1.210 номер стена хаçачĕ кăларнă.

Çаксем вĕсем пурте комсомолецсен политикăллă активлăхĕ, вĕсен колхоз производствинчи ролĕ ӳснине çирĕплетсе параççĕ. Çакна пула комсомол организацийĕсен авторитетчĕ татах та ӳсрĕ, çамрăксен Ленинла—Сталинла комсомол ретне кĕрес шухăш-кăмăлĕ хăпарчĕ.

Çапах та хăшпĕр комсомол организацийĕсем хăйсен ĕçне япăх туса пыраççĕ-ха. Улатăр районĕнчи Алтышево колхозĕнче чылай комсомолецсем колхоз правленийĕнче е ялсовет канцелярийĕнче ĕçлеççĕ те, уя тухса та курмаççĕ, колхозниксем хушшинче массăллă-политикăллă ĕçе туса пымаççĕ. Улатăр машинно-тракторнăй станцин политотдел начальникĕн комсомол енĕпе ĕçлекен помощникĕ Тимпейская юлташ комсомол организацийĕсене пачах çителĕксĕр пулăшать, комбайнерсемпе трактористсем патĕнче сахал пулать, вĕсем хушшинче социализмлă ăмăртăва сарассишĕн тăрăшмасть.

Комсомолецсен хăйсен активлăхне вăйлатса, колхозсене уйхир ĕçне хăвăрт вĕçлеме пĕтĕм вăйран пулăшмалла.

Л. МИХАЙЛОВ,
ВЛКСМ Обкомĕн пропаганда енĕпе ĕçлекен секретарĕ.

Ют çĕршывсенче

Люксембургри пĕтĕмĕшлĕ забастовка

Çĕршывра чрезвычайнăй положени туса хунă

ЛОНДОН, сентябрĕн 11-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Люксембурга Германи çумне пĕрлештернине тата Люксембург çамрăкĕсене Германи çарне илнине хирĕç протестлесе Люксембургра пĕтĕмĕшлĕ забастовка пуçланнă. Çĕршывра чрезвычайнăй положени туса хунă. Çакă вăл нимĕçсем оккупациленĕ çĕршывра тăвакан пĕрремĕш забастовка пулса тăрать. Люксембургăн гитлерла правителĕ Симон: забастовкăна хутшăннисене нумайĕшне вĕлермелле приговорсем йышăннă, вĕсене халех пере-пере пăрахаççĕ, тесе пĕлтернĕ.

Францин оккупацилемен пайĕнчи çивĕч лару-тăру

Лионăн генерал-губернаторне ĕçрен кăларнă

ЛОНДОН, сентябрĕн 10-мĕш. (ТАСС). Информаци министерстви çапла пĕлтерет: Францирен илнĕ хыпарсем тăрăх, Лаваль Лионăн генерал-губернаторне Сен-Винсен генерала ĕçрен хăтарнă тата çартан кăларса янă. Генерал Сен-Винсена ĕçрен кăларасси вăл Виши приказĕ тăрăх çынсене массăллăн арестлеме граждăнла влаçсен аллине войскăсем пама килĕшменнишĕн пулнă.

Лионра юлашки вунă кун хушшинче демонстрацисем тата влаçсемпе халăх хушшинчи тытăçусем пулса иртеççĕ. Полици нумай çынсене арестленине хирĕç халăх протестлет. Кĕрешекен Францин Лондонри главнăй штабне килсе тăракан хыпарсем тăрăх, Францин пур районĕсенче те Лавалĕн юлашки вăхăтри террористла ĕçĕсене хирĕç вăйлă хумханусем пулса иртеççĕ. Францин оккупацилемен пайĕнчи мĕнпур пысăк хуласенче лару-тăру çивĕчленсе кайни палăрать.

«Дейли экспресс» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Францин оккупацилемен пайĕнче Лавалĕн влаçĕсем юлашки талăксем хушшинче католиксен çĕршер священникĕсене, вĕсем хăйсен проповечĕсенче халăха Лионри тата Тулузăри архиепископсен çырăвĕсене вуласа панăшăн, арестленĕ. Çав архиепископсем хăйсен çырăвĕсенче еврейсене этемле мар массăллăн хĕсĕрленине хирĕç хыттăн протестленĕ пулнă тата ашшĕ-амăшĕсемсĕр, кил-çуртсемпе апат-çимĕçсемсĕр тăрса юлнă еврей ачисене пур енĕпе те пулăшма чĕннĕ пулнă.

Общинăсен палатинчи пренисем

ЛОНДОН, сентябрĕн 10-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: премьер-министр Черчилль доклачĕ тăрăх тухса калама чи малтан опозици лидерĕ Артур Гринвуд лейборист сăмах илнĕ. «Суту-илӳ флочĕ пирки çăмăлттайла лăпланса лармалла мар пирĕн,— тенĕ вăл,—хĕçпăшалсем туни çинчен кирек мĕн каласан та, суту-илӳ флочĕ хальхи вăхăтра вăрçăн чи йывăр ыйтăвĕ пулса тăрать», тенĕ. Черчилль Мускава кайса килни çинчен Гринвуд çапла каланă: Англи общественноçĕ Мускава кайни çинчен савăнса итлерĕ. Англи халăхĕ хăйĕн чĕринче çакна туйса тăрать: вăл Российăшăн мĕн чухлĕ нумай тунă пулсан та—çакă вăл çителĕксĕр-ха. Мускава кайнине ырларĕç, мĕншĕн тесессĕн вăл вăрçă вăрçас ĕçре пĕр-пĕринпе ытларах çыхăнса ĕçлеме пулассине шантарать.

Консерватор Кэри çапла каланă: иккĕмĕш фронт çинчен уççăн каламалли вăхăт çитрĕ. Хĕвеланăçĕнче наступлени пуçлансан, вăл вăхăтлăха тунă операци мар, пысăк операци пулса тăмалла, тенĕ.

Лейборист Хэйден Гест правительство хальхи вăхăтра мĕншĕн Хĕвеланăçĕнче наступлени пуçлама ытларах хатĕр марри çинчен Черчилль общинăсен палатине каласа паманни пирки ӳпкелешсе каланă. Германие материк çинче наступлени туса çеç çĕнтерме пулать,—тенĕ вăл,—Германи хулисем çине инçе каякан самолетсемпе вĕçсе пырса бомбăсем пăрахнипе çеç çĕнтерме çук, тенĕ.

Пренире тухса калас текенсем урăх пулманнипе Черчиллĕн сăмахне сӳтсе явма чарăннă.

Черчилль общинăсен палатинче Индири лару-тăру çинчен тухса калани

ЛОНДОН, сентябрĕн 10-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Черчилль общинăсен палатинче Индири лару-тăру çинчен тухса каланă. Вăл çапла каланă: Индире лару-тăру лăпланать, пĕтĕмĕшпе илсен—ăна лăпкă тесе пулать. Англи правительстви тунă декларацин, Криппс Индире калаçнин никĕсĕ пулса тăнăскерĕн, принципĕсем улшăнмасăр тата çирĕп тăрса юлаççĕ.

Черчилль малалла çапла каланă: Криппсăн сĕнĕвĕсене Индин нациллĕ Конгресĕ йышăнман пулин те, ыйту кунпа пĕтмест, мĕншĕн тесессĕн Конгресс вăл пĕтĕм Индин оргăнĕ мар, вăл индус массисен оргăнĕ те пулса тăмасть.

Черчилль каланă тăрăх, Индин нациллĕ Конгресĕ хальхи вăхăтра хирĕç тăмалла мар тенĕ политикăна пăрахăçланă, çав политикăна Ганди нумайччен вĕрентсе сарса пынăччĕ. Конгресс халь уççăнах «Индие Япони захватчикĕ, Ассам чиккисенчен çавăн пекех тата Бенгали заливĕн хĕвелтухăçĕнчи çыранĕнче тăраканскертен, хӳтĕлессине йывăрлатас» çул çине тăчĕ. «Индин нациллĕ Конгресĕ çав ĕçре Японин пиллĕкмĕш колоннинчен пулăшу илсе тăнă та пуль,—тенĕ Черчилль, —çав пулăшу вăл питĕ те анлăн пулса пырать, вăл стратегиллĕ пунктсен районĕсенче уйрăмăнах вăйлăн палăрать. Сăмахран, çакă кăтартуллă: Ассам чиккисенче Бенгали провинцине хӳтĕлекен Инди вăйĕсен çыхăнăвĕсене уйрăмах активлăн тапăнаççĕ». Черчилль малалла çапла каланă: çавăн пек обстановкăра вице-корольпе Инди правительстви Конгресăн центртипе провинцисенчи оргăнĕсене хупма кирлĕ тата Гандипе унăн ытти лидерĕсене тытса хупма кирлĕ тесе шутларĕ, тенĕ.

Черчилль çакна палăртнă: Индие хӳтĕлесси, Англи войскисене шутламасан, çапăçма пултаракан расăсенчен чылай килет; Конгресс çав расăсене хăй майлă çавăраймасть. Индире обязательнăй йĕркепе çара илес йĕрке çук пулин те, пĕр миллион ытла индиец ĕнтĕ пĕрлешнĕ нацисен ĕçĕшĕн хăйсен ирĕкĕпе кĕрешме хапăл турĕç,—тенĕ Черчилль.—Юлашки икĕ уйăх хушшинче çĕнĕрен 140 пин доброволец ытла çара кайнă.

Черчилль çапла каланă: Конгресс Инди çарне аркатма е Индири чиновниксен питех те пысăк аппаратне хăйĕн ĕçĕсене туса тăмашкăн кансĕрлеме пултараймарĕ. Индири пур обществăллă учрежденисем те çаплах ĕçлеççĕ, провинцисенчи правительствăсен министрĕсем хăйсен вырăнĕнчех лараççĕ, Конгресс çыхăнусене пăсма хăтланни пăчланса пырать, çаратнине тата вут тĕртнине пусарса лартаççĕ, айăплисене хамăр енчен нумай жертво тумасăрах наказани параççĕ. Черчилль Индие подкреплени нумай пыни çинчен пĕлтернĕ. Юлашкинчен вăл общинăсен палатине çапла каласа ĕнентернĕ: Индири лар-тăру пирки хытă хăрамашкăн хальхи вăхăтра нимĕнле сăлтав та çук», тенĕ.

АНГЛИ БОМБАРДИРОВЩИКĔСЕМ ГАВРПА ШЕРБУРА ТАПĂННИ

ЛОНДОН, сентябрĕн 9-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: сентябрĕн 8-мĕшĕнче «Бостон» йышши бомбардировщиксем Гаврти доксем çине вĕçсе пырса тапăннă. Кайрантарах «Бостон» самолетсен ытти соединенийĕсем Шербур докĕсем çине бомбăсем пăрахнă.

Англи бомбардировщикĕсем Франкфурта тапăнни

ЛОНДОН, сентябрĕн 9-мĕш. (ТАСС). Англин авиаци министерстви çапла пĕлтернĕ: Англи бомбардировщикĕсем сентябрĕн 9-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Германи çине вĕçсе пынă чухне пуринчен ытла Майн çинчи Франкфурта вăйлăн тапăннă. Хулара вăйлă пушарсем тухнă. Çав операцисенче пулнă бомбардировщиксен пысăк соединенийĕсем Рейн облаçĕнчи ытти объектсене те атакăланă.

Уилкине Турцин ютçĕршыв ĕçĕсен министрĕ йышăнни

АНКАРА, сентябрĕн 9-мĕш. (ТАСС). Анатоли агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Турцин ютçĕршыв ĕçĕсен министрĕ Менеменджиоглу Уилкине йышăннă. Вĕсем икĕ сехет хушши калаçнă.

Аргентинăра Германи концессине пăрахăçа кăларнă

НЬЮ-ЙОРК, сентябрĕн 9-мĕш. (ТАСС). Аргентина правительстви Германин «Кондор» ятлă компанине усă курма панă концессине пăрахăçа кăларнă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

К СВЕДЕНИЮ ЗАОЧНИКОВ, ДОПУЩЕННЫХ К СДАЧЕ ГОСЭКЗАМЕНОВ В ПРОШЛОМ И ТЕКУЩЕМ ГОДАХ

Чувашский Государственный Педагогический Институт с 5 по 25 сентября с. г. назначает экзаменационную сессию для всех студентов-заочников, допущенных к сдаче государственных экзаменов в текущем и прошлом годах.

ДИРЕКЦИЯ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 929

Типография №1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР, Заказ № 2. Ф 6. 58 34 п. л.